КĔВĔ АСАМЛĂХĔ

Шупашкарти ÿнер музейĕн хăйне май акустикăллă залĕсенчен пĕринче Чăваш патшалăх академи капелли юрлать. Чиркÿ музыкин ятарлă концертĕнче — С. Рахманинов, П. Чайковский, А. Струмский, Д. Бортнянский, Д. Христов, М. Балакирев хорĕсем. Тĕрлĕ композиторсем, искусствăра кашниех тĕнчипе курăмлă сăн-сăпат хăварма ĕлкĕрнĕ пысăк ăстасем çырнă нумай сасăллă çак произведенисене, анчах вĕсен кĕвĕ тытăмĕнче — пĕр тема, пĕр туртăм, пĕр хăват: ĕненÿ. Çыхăнтар çав таса та аслă ĕненÿ вăйне хăвăн чун-чĕрÿнти ырă ăнтăлупа — эсĕ те аслă тĕнчен пархатарлă пурнăç йĕркинче вырăн тупăн, çут çанталăкăн пĕр пĕтĕм килĕшÿлĕхĕнче çеçке çурăн, çимĕç парăн, çав вăй тытса тăракан пĕрлĕх картинче ырă ĕçпе хăвна тивĕç ят-сум илĕн... Çак уйрăмлăха тарăннăн ăнланса, сасăсен илемне пĕр шăрçана тирсе е пĕр чечек кăшăлĕ туса кăтартать капелла дирижерĕ, çав шăрçа е çав кăшăл витĕр хăйĕн асамлă тĕнчине илсе кĕрет, унта çавăтса çÿрет...

Морис Николаевич Яклашкин дирижер пултарулăхĕ çинчен юлашки çулсенче музыка тĕпчевçисем тивĕçлипех çырчĕç, тивĕçлипех калаçрĕç. Чăнах та, вăл ертсе пыракан коллектив Атăлпа Урал хушшинчи республикăсенче çеç мар, пĕтĕм Раççейĕпех паллă хорсенчен пĕри пулса тăчĕ, Мускаври, Санкт-Петербургри, Чулхулари, Хусанти музыка уявĕсем пĕри те вăл хутшăнмасăр, вăл ырăпа палăрмасăр иртмерĕç. Пирĕн капелла 1987 çулта К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш Патшалăх премине илчĕ, 1988 çулта Венгрири Дьендьеш хулинче Пĕтĕм тĕнчери фестиваль дипломанчĕн ятне тивĕçрĕ, 1991 çулта Санкт-Петербургри «Раштав каçĕсем» музыка фестивалĕнче пулчĕ, Мускаври чи чаплă концерт залĕсенче хăйĕн ăсталăхне нумай хутчен кăтартрĕ. Капелла, хамăрпа кÿршĕллĕ халăхсен композиторĕсемпе тачă çыхăну тытнă май, тутар, пушкăрт, ирçе-мăкшă, çармăс, удмурт чĕлхисемпе çырнă çĕр ытла юрра вĕренчĕ, вĕсене халăх умĕнче ăста юрласа пачĕ. Çак ĕçсем йăлтах Раççей тата Чăваш искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ Морис Яклашкин ячĕпе çыхăннă.

Мĕнрен пуçланнă-ха Морис Николаевичăн музыкăри çул-йĕрĕ? Юрă-кĕвĕ енне туртăнасси пĕчĕклех палăрнă унăн. Ахăртнех, ку туртăм унăн ашшĕпе амăшĕ те музыкăна юратакансем пулнăран килнĕ-тĕр: Николай Михайлович та, Елена Порфирьевна та юрлама-ташлама та ăста, алла купăс е балалайка тытсан та калас тенĕ кĕвве чиперех калама пултараççĕ. Çавна пулах ĕнтĕ Морис та виççĕмĕш класра чухнех ашшĕнчен хăйне ята хут купăс илсе пама хистесех ыйтать. Ашшĕ, ялти шкул учителĕ, ачин туртăмĕсене хăй те аванах курса тăнăскер, хĕллехи пĕр сивĕ кун Тăвай районĕнчи Чутей ялĕнчен купăс туянма тесе ятарласах Канаша каять. Ашшĕ таврăнасса чăтăмсăррăн кĕтнĕ ывăлĕ çĕнĕ купăса тÿрех тăсса яма хăтланнă, анчах ашшĕ ăна пÿртре тарласа кайнă купăса калаттарман, вăл килти сывлăша хăнăхасса кĕтме хушнă. Ывăлĕ вара, хăй халех çепĕç кĕвĕсем янăраттарса ярасса шанаканскер, купăса ытарайманнипе ăна пĕрмай алшăллипе шăлкаласа ларнă, унăн тĕсне пăхса киленнĕ, шурă тÿмисене пускаланă. Йăлтăркка хромка типсе çитсенех вăл сасăсем мĕнле вырнаçнипе паллашма пуçланă, çапла, куллен-кун тенĕ пек нăриклеттерсе, пĕр-икĕ уйăхранах шкулти концертсене купăспа хутшăнма тытăннă.

1962 çулта, ялти шкулта сакăр çул пĕтерсе тухсан, Морис Канашри педагогика училищин музыка уйрăмне кĕрет. Вăл вăхăтра кунта çĕр-шыври чи паллă консерваторисенче пĕлÿ илсе пуян опыт пухнă преподавательсем ĕçленĕ. Музыка теорийĕпе Кирилл Иванович Иванов, вокал енĕпе Борис Семенович Савинков, хорпа ĕçлеме Петр Григорьевич Федоров вĕрентнĕ. Йышăну экзаменне те тĕплĕн ирттернĕ вĕсем, ачасенчен чи пултаруллисене суйласа илнĕ. Ахальтен мар Мориспа пĕр вăхăтра вĕренекенсенчен каярахпа республикăри паллă специалистсем пулса тăраççĕ: калăпăр, халĕ педагогика институтĕнче кафедра заведующийĕнче ĕçлекен Юлия Дмитриева, ăста баянист Борис Мацко, Чăваш республикин тава тивĕçлĕ артистки Фаина Иванова, пултаруллă режиссер тата актер Иосиф Дмитриев тата ыттисем те... Çакнашкал творчествăлла лару-тăрура туптанать те Яклашкинăн ăсталăх никĕсĕ. Кунтан вăл музыка учителĕн дипломне илсе тухать. Хăй черечĕпе çар ретĕнче тăрса килнĕ хыççăн Морис Николаевич Тăвайри вăтам шкулта ĕçлет, çул талăк хушшинче вĕрсе каламалли инструментсен оркестрне йĕркелет. Ку оркестр ун чухнехи Тăвай районĕн культура пурнăçне хăйне майлă çĕнĕлĕх кÿрет, мĕншĕн тесен унччен кунта оркестр тавраш пулман. Анчах мал ĕмĕтлĕ çамрăк малаллах пăхать: пĕлĕвне ÿстерес тĕллевпе вăл 1969 çулта Шупашкарти И. Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен педагогика институчĕн музыка факультетне вĕренме кĕрет. Кунта вăл дирижер дисциплинисене тата тĕплĕнрех алла илет: хора ертсе пырасси, сасăсен килĕшĕвĕ, дирижер ăсталăхĕ, музыка теорийĕ енĕпе нумай ĕçлет, тĕнче классикине тĕпчет. Диплом илнĕ хыççăн Морис Николаевич Канашри хăй вĕреннĕ педагогика училищине аслă пĕлÿллĕ преподаватель пулса таврăнать, тăватă çул ĕçлет, çав хушăра лайăх хор йĕркелет, кăткăс произведенисем вĕренет, вĕсене концерт программисене кĕртет.

Пĕррехинче Канашри училищĕре Чăваш телевиденийĕпе радио хорĕ концерт кăтартать. Хор унта пырасси сăлтавсăр пулман: ку вăхăтра ĕнтĕ ăна малтан кунти хор класĕнче ĕçлекен Петр Федоров композитор ертсе пынă. Ахăртнех, вăл хăй ĕçленĕ училищĕре творчество отчечĕ туса парас тенĕ пулмалла. Анăçлă иртнĕ концерт хыççăн ăшпиллĕн калаçса ларнă чухне Петр Федоров дирижерпа Михаил Михайлов баянист Морис Яклашкина хăйсене хормейстер кирли çинчен пĕлтереççĕ, ăна Шупашкара куçма чĕнеççĕ. Çапла 1977 çултан пуçласа çак паллă коллективпа çыхăнать Морис Николаевичăн пултарулăх çулĕ, çакăнта мăшăр çунатне сарать унăн хăйне евĕрлĕ таланчĕ.

Дирижер — кăткăсран та кăткăс професси. Сĕрме купăсçă е пианист инструментпа ĕçлет пулсан, хор дирижерĕн инструменчĕ вара — нумай çынран, тĕрлĕ кăмăллă, тĕрлĕ шăпаллă йышран тăракан калама çук сисĕмлĕ организм. Çав организма пĕр тĕллевлĕх, пĕр кăмăллăх, килĕшÿлĕх пама, çав килĕшÿлĕхе ăсталăх çулĕпе çÿлелле туртма тарăн музыка пĕлĕвĕсĕр пуçне йĕркелÿçĕ таланчĕ кирлĕ. Пысăк йышпа — уйрăмах творчество çыннисемпе — ĕçленĕ чухне санăн хăвăнах педагог та, психолог та, администратор та пулмалла. Унсăрăн ĕç каймасть. Шăпчăк е сар кайăк çуркунне çитмесĕр юрламан пекех, кунта та çынсем сана, эс вĕсене туллин ăнланмасан, профессилле музыка та чăн-чăн асамлăх тĕнчи пулса тăраймасть. Еçри паллă юлташĕсемпе — Аристарх Орлов-Шуçăмпа, Герман Лебедевпа, Григорий Хирпÿпе, Петр Федоровпа çыхăну тытни ăна çак чăнлăха никĕсе хывма пулăшать.

Дирижер ĕçĕ — вĕçĕмсĕр шырав. Мĕншĕн чăваш дирижерĕсем Аристарх Орлов-Шуçăм таланчĕ умĕнче пурте пуç таяççĕ? Мĕншĕн тесен Аристарх Гаврилович кашни произведение хăй майлă вулать, хăй майлă ăнланать, автор шухăш-кăмăлне тĕпе хурса ăна хушма майсемпе пуянлатать. Çав хушма илемлĕхе шыраса тупас енĕпе Аристарх Гавриловичăн ăсталăхĕ вĕçĕ-хĕррисĕр. Хор стихийин хура тăвăллăхĕпе хĕвеллĕ асамачĕ хушшинчи аталану çул-йĕрне курса та туйса тăрать вăл. Çакă ытти чăваш дирижерĕсемшĕн — хăйне евĕрлĕ пысăк шкул.

Е Степан Максимовăн пĕтĕмĕшпех музыкăна халаллана пурнăçне, вăл калама çук пысăк ăсталăхпа илемлетнĕ чăваш халăх юррисене илер-ха тата. Кама вăл йĕркеленĕ «Атьăр, хĕрсем, уява» юрра пĕрре те пулин чун витĕр кăларса итлеме тÿрĕ пÿрнĕ, çав çын асăннă кĕвĕ тыткăнĕнчен ĕмĕрне те тухаймасть, унăн сăввипе кĕввин пĕрлĕхлĕ гармонийĕн хăвачĕ, чăн чăвашла философи çинче никĕсленсе тăракан çутă минорлăхĕ ăна мĕн пурнăç тăршшĕпех шухăшлаттарать, вăхăтран вăхăта куççуль те кăларттарать. Мĕнле дирижер кăйĕн вăй-халне кĕрĕслесе пăхмĕ чăваш çыннин чунне уçса паракан пуян кĕвве итлекен умне туллин кăларас тесе? Çакă мар-и унăн чĕре варринчи тĕллевĕ?

Филипп Лукин кĕввисен ытарайми çепĕçлĕхĕ, Федор Васильевăн полифони ăсталăхĕ, Александр Васильевăн тĕнче классики çинче хамăрла çĕнĕлĕхпе никĕсленекен сасси — çаксенче тата ытти пултаруллă чăваш композиторĕсен шыравĕсенче кашни дирижер валлиех ĕç нумай. Капелла çав произведенисенчен нумайăшне пленка çине çырас енĕпе ĕçлерĕ, вĕсене «Мелодия» фирмăна пластинкăсем кăларма юрласа пачĕ, кулленхи репертуара та кĕртрĕ. Ĕмĕр пурăн, ĕмĕр вĕрен, тенĕ те халăхăмăр, кашни кун тĕпчесен те, вĕçе-хĕррисĕр шĕкĕлчесен те çав пуянлăха пĕтĕмĕшпех алла илеес çук. Çапах та унăн тĕп енĕсене ăнланса илме, произведени авторĕ çав концепци патне мĕнле пырса тухнине йĕрлесе тупма пулатех. Çак ĕмĕтпе Морис Николаевич, хăй ăсталăхне куллен ырми-канми туптанисĕр пуçне, Чулхула консерваторийĕнчи А. А. Лебединский профессор класĕнчен вĕренсе тухса тата тепĕр хутчен системăллă аслă пĕлÿ илет, профессилле ăсталăх тĕлĕшĕнчен тата çÿллĕрех пусăма çĕкленет. Дирижерне кура хорĕ, хорне кура дирижерĕ, тенешкел, çак пулăмра Морис Яклашкин ÿсĕмĕ те, хор аталанăвĕ те уççăн курăнса тăраççĕ. Акă, калăпăр, телевиденипе радио хорĕ капелла пулса тăчĕ. Мĕне пĕлтерет-ха ку? Ку вăл — малалла ăнтăлни. Капеллăн штачĕ те пысăкрах, эппин, кăткăс партисене туллинреххĕн те сулăмлăраххăн сăнарлама май парĕ вăл. Чипер пулсан, тен, капеллăн хăйĕн оркестрне те йĕркелĕпĕр-ха. Вара çĕр пин сăвăллă та çĕр пин юрăллă халăхăмăрăн хор культурине тата çÿллĕрех шая çĕклемелли çĕнĕ майсем уçăлĕç.

Никамшăн та çĕнĕлĕх мар: чăваш халăхĕн юрă культури мĕн ĕлĕкренех пысăк пулнă. Тухăçпа Европа цивилизацийĕсен чиккинчи халăхăмăр лайăххине икĕ енчен те илнĕ. Ахальтен мар пирĕншĕн тухăç поэчĕсем никĕсленĕ рубаи те, çиччĕ сыпăклă такмак та çывăх, Европа авангарчĕ те ют мар. Ирĕклĕ сăвă жанрĕнче Геннадий Айхи чăваш пĕтĕм тĕнче поэзине çĕнĕлĕх кÿме пултарни çакна çирĕплетсе парать те. Музыка искусствинче те çавах. Халăхăмăр талантне сасă гармонийĕн пуянлăхĕпе, кĕвĕ асамлăхĕпе уçса пама тăрăшмалла пирĕн дирижерсен.

Çак шухăшпа пурăнать те пирĕн Морис Николаевич. Çак шухăш вĕçĕмсĕр хавхалану кÿрсе тăрать те ăна. Çут çанталăк пиллĕхĕпе чун туртăмĕ пĕрлешсе пĕр тĕллеве пăхăнни, çын çав аслă пархатарпа тĕрĕс усă курма пĕлни пысăк ĕçсем тума май парать. Эппин, ĕçлемелле. Утнăçемĕн уçăлса пыракан çул-йĕре куллен алла илмелле, такăрламалла. Хавхалану вăл вĕçкĕнле хăлаçланасси мар, пĕтĕм вăя хурса вăкăр пек ĕçлесси, тенĕ П. И. Чайковский. Çакна вăл шăпах дирижерсем пирки каланă пек туйăнать. Чăнах та, мĕн чухлĕ ĕçлемелле кăткăс хор произведенине халăх умне кăлариччен? Малтан ăна хăвăн лайăх ăнланса илмелле, вăл мĕнле янăрасса чĕрÿпе илтсе тăмалла, унтан коллектива çав шухăшпа хавхалантарса яма пултармалла, вара сыпăкăн-сыпăкăн, партийĕн-партийĕн вĕренме тытăнмалла, кайран партисене пĕрлештерсе туллин искусство произведенийĕ тумалла. Хушайрăн çавăнта хăвăн чун хĕлхемне — произведени асамлă кĕвĕ пулса янăраса каять, хушаймарăн — ячĕшĕн вĕреннĕ япала çеç пулать. Искусствăра хавхаланусăр ĕçлеме юрамасть.

...Лапка-лапка юр çăвать. Морис Николаевич Яклашкин, ентешĕсемпе курнăçма тăван ялне килекенскер, çăмăл утăпа Чутей хапхинчен кĕрет те хăйсен килĕ еннелле сул тытать. Тÿперен ÿкекен шултăра юр пĕрчисем пĕрре шурă чечексем пек, тепре сисмесĕрех нота çырăвĕн паллисем пек туйăнса каяççĕ. Çав паллăсен килĕшĕвĕнче çуралать те çут çанталăк симфонийĕ. Акă аслă кĕвĕ тытăмне çынсем те кĕрсе каяççĕ: вĕсем Чутей ялĕн хисеплĕ гражданинĕ ятне тивĕçнĕ çамрăк çынна сума суса пуç таяççĕ, ырă сăмах хушаççĕ, аллине чăмăртаççĕ...

Юрий СЕМЕНТЕР

М. Н. Яклашкинан В. Исаев тунă сăн ÿкерчĕкĕ — хушлашкан пĕрремĕш страницинче.